Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

38 (7999) № * Юн кун, 2012 çулхи çу (май) уйăхĕн 23-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Пиллĕкмĕш кинофестиваль

## Кино хыççăн кино

Тунти кун Шупашкарта вак халăхсен кинематографне халалланă Пĕтĕм тĕнчери пиллĕкмĕш кинофестиваль ĕçлеме пуçларĕ. Ăна уçнă çĕре Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче кинофестиваль воспитани ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Халăхсен культурине упраса хăварасси, çамрăксене патриотизмла воспитани парасси тата яваплăх туйăмне аталантарасси çак форумăн кун йĕркинче тăраççĕ.

Фестиваль программинче: 11 конкурс картини, «Фестиваль фестивалей» программăри 4 фильм, Али Хамраев паллă режиссерăн 4 ĕçĕ, çамрăк куракансене валли 4 лента, ятарлă «Ночь кино. Фильмы Леонида Гайдая» проектри 5 картина, истори çулталăкне халалланă 7 фильм.

Пуçласа фестивальте «Киношкола» алăкĕсене уçать. Татьяна Малышицкая актриса ертсе пынипе режиссерсем, сценаристсем, операторсем, артистсем тухса калаçаççĕ, хăйсен ăсталăхĕпе паллаштараççĕ.

Киносем кăтартасси, актерсемпе, режиссерсемпе курнăçасси Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Канаш хулисенче, Красноармейски районĕнче иртеççĕ.

Хутшăнăр

## Çитес номерте – викторина

Райхаçат редакцийĕ Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа 40 ыйтуран тăракан викторина хатĕрлерĕ.

Çитес номерте «Ĕç Геройĕ Е. Андреев пирки мĕн пĕлетĕр?» викторина ыйтăвĕсене пичетлетпĕр.

Конкурс икĕ эрне пырать. Тĕрĕс хуравсене палăртсан редакцие ярса парăр.

Çĕнтерӳçĕсене парнесем парса хавхалантаратпăр.

Районăн тăрăшуллă çыннисем

## Пулăшма ялан хатĕр



*Турайри ветеринари лечебницинче 10 çул ертӳçĕ пулса Татьяна Ипполитовна Ухварина (сăн ӳкерчĕкре) ĕçлет. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха каймалла-и, ял çынисем пулăшу ыйтаççĕ-и – тулли ĕç кунĕ валли тимлемелĕх пур. Вăл ертсе пынипе кашни ыйтăвах вăхăтра та вырăнлă татса пама пултаракан туслă коллектив вăй хурать кунта. Турай ял тăрăхĕнчи 11 ялти вуншар-çĕршер выльăха таса-сывă пăхса тăрасси, вĕсем тĕлĕшпе профилактика ĕçĕсене вăхăтра ирттересси питех те пĕлтерĕшлĕ пулнине Татьяна Ипполитовна лайăх ăнланать.*

*Ял çыннисен выльăхĕсене пăхнипе пĕрлех ветеринари лечебници Суворов яч. хис. хуçалăхри обществăлла выльăхсемшĕн те яваплă пулса тăнине палăртрĕ иртнĕ çулхи ĕççене пĕтĕмлетнĕ май «2011 çулхи чи лайăх ветеринари ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ специалист.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Раççейре

## «Мигалкăсен» шучĕ чакать

РФ Президенчĕ Владимир Путин спецсигналсемпе усă курассине йĕркелесси çинчен ятарлă указа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн çĕр-шывра влаç органĕсен 569 автомобилĕ çинче кăна «мигалкăсем» юлĕç. Халĕ кун йышши 1040 автомобиль куллен çула тухать. Ятарлă сигналсемсĕр правительство аппарачĕ, аслă судсем, чылай министерствăсем, федераллă агентствăсемпе службăсем тата ЦИК юлаççĕ.

Пушар хуралĕ, полици, васкавлă пулăшу тата ятарлă службăсем малтанхи пекех ятарлă сигналсемпе усă курĕç.

Саккун июль уйăхĕнчен вăя кĕрет.

Çур аки – 2012

## Ака вĕçленет

Çу уйăхĕн илемлĕ кунĕсене хресчен паян иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен хирте ирттерет. Районти пĕрлешӳллĕ кооперативсенчен тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен вун тăваттăшĕ хăйсен харпăрлăхĕнчи хирсене пĕтĕмпех акса хăварнă. «Путь Ильича» агрофирмăра, Чкалов яч. хис., Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсенче, «ВаСем», «Колос», «Бездна» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче тата С. Сретинскийпе А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ака планĕсене самай иртерсе пурнăçлама хевте çитерне.

## Курăксем ытларах акаççĕ

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне районти пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем пĕр çул ӳсекен курăксене пурĕ 1151 гектар (77 процент) акнă. Пĕр çул ӳсекен курăксем выльăх апачĕн никĕсĕ пулнине шута хурса «Путь Ильича» агрофирма ăна 100 гектар (200 процент), «Свобода» ăратлă выльăх завочĕ 157 гектар (105 процент), Суворов яч. хис. хуçалăх 303 гектар (103 процент) акса хăварнă.

## Çĕр улми пуссинче

Тырă-пулă пуссисене «шуратса» хăварнă хуçалăхсем иртнĕ кунсенче массăллăн çĕр улми лартма тухрĕç. Ĕнерхи кун тĕлне районти çĕр ĕçченĕ пĕрлехи тăрăшулăхпа 270 гектар (23 процент) çĕр улми лартнă. Ку ĕçсем паян А. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче мал туртăмлăрах пыраççĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем 32 гектар (80 процент) çĕр улми лартма ĕлкĕрнĕ. В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ку ĕçе 10 гектар çинче вĕçленĕ. «ДаАн», «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче те «иккĕмĕш çăкăра» 50-30 процент (30-шар гектар) лартнă.

**А. БЕЛОВ.**

# Хастар ĕçпе палăрнăшăн – хисеплĕ ят

Хушу

***ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи майăн 16-мĕшĕнче 233-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен татах тепĕр ушкăнне ĕç стажне кура «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран Муркаш районĕнчен:***

Александрова Галина Алексеевна (Тури Панкли)
Анисимова Галина Максимовна (Çĕньял Очăкасси)
Антонова Христина Васильевна (Чуманкасси)
Аргандеева Римма Николаевна (Канаш выççăлкки)
Аристархова Нина Никифоровна (Тереç)
Васильев Веналий Васильевич (Тойкилтĕ)
Васильева Галина Николаевна (Тушкасси)
Григорьева Юлия Ивановна (Москакасси)
Данилова Светлана Петровна (Кашмаш)
Дмитриева Таисия Николаевна (Муркаш)
Енисеева Венера Константиновна (Ярапайкасси)
Ершова Ксения Никифоровна (Калайкасси)
Ефимов Илья Игнатьевич (Хорнуй)
Зайцев Михаил Андреевич (Сентимĕр)
Захарова Валентина Петровна (Пиккикасси)
Иванова Елена Поликарповна (Муркаш)
Иванова Клавдия Ивановна (Уйкас Апаш)
Иванова Тамара Николаевна (Тушкасси)
Игнатьева Людмила Георгиевна (Лапкасси)
Игнатьева Юлия Петровна (Çуткӳл)
Ильина Мария Ивановна (Çеçмер)
Казакова Лидия Васильевна (Тушкасси)
Капитонова Юлия Димитриевна (Йӳçкасси)
Каргина Анна Степановна (Мемеккасси)
Касьянова Фаина Ивановна (Кармăш)
Квасова Людмила Викторовна (Вускасси)
Кириллова Зоя Ивановна (Мăн Сĕнтĕр)
Кожевникова Ольга Ивановна (Пăсăрман)
Колбасов Николай Яковлевич (Сентимĕр)
Колбасова Зоя Васильевна (Сентимĕр)
Кольцова Нина Васильевна (Мăн Тутаркас)
Купцова Зоя Геннадьевна (Хорнуй)
Ласточкина Августа Арсентьевна (Çĕмĕртлĕх Чемей)
Любимова Раиса Алексеевна (Çатракасси)
Миронова Зоя Петровна (Ятман)
Музыкова Клара Игнатьевна (Муркаш)
Мясников Алексей Порфирьевич (Пиккикасси)
Николаев Алексей Александрович (Уйкас)
Николаев Николай Павлович (Уйкас Апаш)
Николаева Римма Алексеевна (Çурлатри)
Офаринова Мария Матвеевна (Ваçкасси)
Павлова Татьяна Евтихиевна (Нискасси)
Пастухова Фаина Владимировна (Мăн Токшик)
Петрова Юлия Михайловна (Ятман)
Плотникова Алефтина Захаровна (Турикасси)
Поликарпова Елизавета Димитриевна (Ярославка)
Прохоров Николай Димитриевич (Кăпас)
Романова Калерия Михайловна (Анаткасси)
Седлова Нина Сергеевна (Апчар)
Семенова Александра Афанасьевна (Мулкачкасси)
Сергеев Николай Порфирьевич (Çатракасси)
Сергеева Валентина Николаевна (Муркаш)
Сергеева Мария Васильевна (Карамалькасси)
Скворцова Анна Федоровна (Ятман)
Смирнова Зоя Петровна (Калмăккасси)
Смирнова Фетулия Кузьминична (Платкасси)
Степанова Татьяна Степановна (Тивĕш)
Терентьева Людмила Степановна (Анаткасси)
Федорова Елизавета Федоровна (Анаткас Апаш)
Фомина Елизавета Ивановна (Ярак)
Харитонова Галина Андреевна (Хуракасси выççăлкки)
Шадрина Римма Яковлевна (Ярославка)
Шарикова Галина Владимировна (Тереç)
Яковлева Римма Андреевна (Патаккасси)

**Асăрхаттарни: «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ çӳлте асăннă гражданссене удостоверенисене савăнăçлă лару-тăрура район администрацийĕнче майăн 24-мĕшĕнче 10 сехетре параççĕ.**

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, кукамая, асаннене, аппана – Уйкас Янасал ялĕнче пурăнакан **Тамара Витальевна СЕМЕНОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, ихсĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Хаклă çыннăмăра, юратнă аттене, маçака – Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Пимен Кириллович СМИРНОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Пурăн çĕр çул савăнса, пурнăç телейне туйса, ачу-пăчуна савса. Кун-çул сукмакĕпе тивĕçлĕ утса, хăвăн ăшшупа пире савăнтарса.

Çитес кунсенче мамакăн **Людмила Тимофеевнăн** çуралнă кунĕ çитет. Чун-чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе ăна та саламлатпăр. Татах нумай пурăнăр, эпир сире юрататпăр, эсир пур чухне эпир телейлĕ.

**Саламлаканĕсем: Валера ывăлĕ, Татьяна кинĕ, Ангелина, Максим, Кирилл мăнукĕсем.**

Çырăнтару – 2012

## ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм хальхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуçлать.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

# «Тури панă çын пекех пулнă»

Е. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май



*Е. Андреевпа А. Николаев.*

**Çапла калаççĕ: енчен те эпир çын çинчен аса илетпĕр пулсан, вăл пурăнать. Пирĕн чĕресенче, пирĕн ĕçсенче пурăнать. Вăл хăçан пурнăçран уйрăлса кайни пĕлтерĕшлĕ мар, çын çинчен аса илни паха. Социализмла Ĕç Геройне Евтихий Андреевич Андреева та çав шута кĕртмелле.**

«Пирĕншĕн Тури панă çын пекех пулнă вăл», – тет Е.А. Андреев пирки **Н.В. Киселева**. Нина Васильевна Евтихий Андреевич хуçалăха ертсе пынă чухне фермăра сысна пăхакан пулса ĕçленĕ. Ĕçри пултарулăхне кура ăна хуçалăх ертӳçи ферма коллективне ертсе пыма шаннă. Тивĕçлипе пурнăçланă вăл хăйĕн ĕçне. «Унпа ĕçлеме йывăр пулман. Вăл çирĕп çынччĕ. Пире, ферма заведующийĕсене, бригадирсене, зоотехника, агронома кашни кун ирхине 6 сехетре пухатчĕ, камăн мĕн ĕçлемеллине палăртса тухатчĕ», – каласа парать паян Нина Васильевна.

Нина Васильевна сăмахĕсемпе ун чухне сыснасен талăкри вăтам ӳт хушăслăхĕ 566 грампа, майракаллă шултра выльăхсен 851 грампа танлашнă, ытларах та пулнă. Ун чухне биологи тĕлĕшпе хушма препаратсем кăларман. Евтихий Андреевичăн выльăхсене тăрантармалли хăйĕн рационĕ пулнă. Выльăхсене таса шыв тата курăк шывĕ кăна ĕçтернĕ.

**Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан Геннадий Геннадьевич Толстов çапла каласа парать:**

– Евтихий Андреевич 1933 çулта аттен пиччĕшĕ Сергей Алексеевич Толстов патĕнче пурăннă. Ял Совет ĕçтăвкомĕнче ял хуçалăх продукцийĕ хатĕрлессипе уполномоченнăй пулса ĕçленĕ. Муркашра гостиница тавраш пулман, çавăнпа уйрăм çын хуçалăхĕнче пурăннă.

1953 çулта Муркаш шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренеттĕм. Ăна çавăн чухне колхоз председателĕ пулма суйларĕç. Хыççăн Омск облаçĕнче çерем çĕрсене сухаланă çĕрте пултăм. Тырă пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлерĕм.

Çерем çĕрсене уçнă çĕртен таврăнсан 1956 çулхи ноябрь уйăхĕнче вулавçăсен пӳлĕмĕн заведующийĕ пулма çирĕплетрĕç. Кашни фермăрах хĕрлĕ кĕтессем йĕркеленĕ, вĕсене кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. Çĕньялта чăхчĕп ферми тата Муркашра сурăх ферми вырнаçнă. Вĕсенче кĕнекесен куçса çӳрекен выставкисене йĕркелеттĕмĕр. Кашни фермăрах темăпа пăхнă журналсем пулнă.

Евтихий Андреевич халăх пултарулăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Кашни ялтах хор коллективĕсем йĕркеленĕ. Колхозра вара пĕрлештернĕ хор коллективĕ те пулнă. Çамрăксене клуба явăçтарма майсем туса пама тăрăшнă. Коллективсем валли 4 баян илсе пачĕ. Баянистсене те тупса хатĕрленĕ.

Хĕл кунĕсем валли 16 мăшăр йĕлтĕр илсе пачĕ. 4 ял валли 4-шар мăшăр пулса. Ăмăртусене хутшăнаттăмăр. Элĕк районне те ăмăртăва кайнине ас тăватăп. Ăмăртусене хутшăнакансем валли спорт формисем те илсе пачĕ. Спорт ăмăртăвĕсем валли укçа та уйăратчĕ.

Çамрăксене ĕçе вырнаçтарассипе тимлетчĕ. Çимелли ытлах пулман темелле. Çамрăксене фермăсене вырнаçтарассипе тăрăшатчĕ. Мĕншĕн тесен фермăсенче вăй хуракансем ун чухне япăх мар ĕçлесе илме пултарнă.

Вулавçăсен пӳлĕмĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ çулсем пирки çавна калама пултаратăп. Малти опытпа вăл яланах паллашса тăратчĕ. Сăмахран, чăх-чĕпсенчен çулталăк тăршшĕпе çăмарта илессипе, сурăхсен ăратлăхĕн ыйтăвĕсемпе, ăратлă майракаллă шултра выльăхсем ĕрчетессипе тĕрлĕ литературăпа интересленетчĕ, хамăр çĕр-шыври кăна мар, чикĕ леш енчи журналсене те çырăнса илетчĕ.

Чиркӳ кунĕсемпе уявĕсене сума сăватчĕ. Уяв кунĕсенче лашапа чиркĕве кайма та ирĕк паратчĕ. Çынсем юрататчĕç ăна. Ĕçре пултаруллисене укçа-тенкĕ тĕлĕшпе хавхалантарма та манмастчĕ.

Ырăпа кăна аса илеççĕ Евтихий Андреевич Андреева унпа пĕрле ĕçленисем, ăна пĕлекенсем, аса иленсем. Чăннипех халăхшăн тăрăшакан çын пулнă вăл. Уншăн хăйĕн мар, ĕç çыннисен, хуçалăх ĕçченĕсен интересĕсем тĕп вырăнта пулнă.

**В. ШАПОШНИКОВ.**



*Е. Андреев хуçалăх ĕçченĕсемпе.*

# Пуринпе те пĕр чĕлхе тупнă

**Мария РОЖКОВА, Муркаш ялĕнчен:**

– Евтихий Андреевичпа паллашасси çапла пулса иртрĕ. Манăн анне ун чухне колхоз лашисене пăхатчĕ. 4 çул вĕреннĕ хыççăн малалла шкула кайма тивейменрен эпĕ те, 13 çулхи хĕр ача, аннене пулăшма çӳреттĕм. Хăйне председателе суйланă хыççăн тепĕр куннех пулĕ вăл лаша пăхакансем патне пычĕ те куларах çапла ыйтать: «Çак кулакан хĕр ача та лашасем пăхать-и вара?» – тет. Аслă конюх Александр Александров ман хута кĕчĕ, пурте ун пекех тăрăшсан, ĕçсем татах аван каймалли пирки пĕлтерчĕ.

1954 çулта Çурлатринчи ĕне ферминче ĕçлеме пуçларăм. Ун чухне фермăра вăй хураканăн ĕçĕ çăмăл пулнă теместĕп. Выльăхсене шăварма куллен 90 çĕклем те ытла шыв çĕклеттĕмĕр. Апатне те лашасемпе хамăрах турттарнă, тислĕкне те кăларнă. Мĕн тăвăн, чăтнă. Пирĕн хушăра никам та нăйкăшакан пулман.

Пăрусем пăхакансем эпир ун чухне тăваттăн пулса. Кашни выльăх пăхакан пуçне 20–25 пăру тиветчĕ.

Çурлатринчен качча килсен уй-хир бригадинче ĕçе тытăнма тӳр килчĕ. Тĕрĕссипе хамăн фермăнах кайма шухăш пурччĕха. Анчах та упăшка пус та кас килĕшмерĕ. Питĕ кĕвĕç çынччĕ вăл, уй тункати çумне те хушма пултаратчĕ пуль.

Уй-хирте те çăмăл пулман. Тыррине акнă, вырнă, çапнă – пĕтĕмпех алăпа. Уйрăмах тырă вырассипе ывăнсах çитеттĕмĕр. Юрать-ха ачасем, пиччешăллăмсем пулăшатчĕç. Çул хĕррипе автоçулпа иртсе каякан машинăсем çинчи çынсем пире çапла кăшкăрса хăварнине те ас тăватăп: «Пăрахăр çурлусене, эпир хăçантанпа ĕнтĕ тырă алăпа вырмастпăр», – тетчĕç.

Евтихий Андреевич ĕçне кура ĕç укçине те тӳлетчĕ. Çулталăкне 725 ĕç кунĕ ĕçлесе илни те пулнă. Пĕр ĕç кунĕ пуçне вара ун чухнехи укçапа 4 тенкĕ таран, 3–4 килограмм тырă, 4 килограмм улăм, 1 килограмм утă паратчĕç. Килти хуçалăха тытса пыма епле пысăк тĕкĕ пулнă вăл.

Шăпа çапла пӳрнĕ пулĕ. Евтихий Андреевичăн юлашки кунĕсене те курма тиврĕ. Евтихий Андреевич больницăра чухне эпĕ те çав больницăрах пилĕк ыраттарнипе выртаттăм. Хăй ыйтсан чей те туса ĕçтертĕм эпĕ ăна ун чухне.

Шел, пурнăç çулĕ вăрăм пулаймарĕ унăн. Апла пулин те вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче те тепĕр çын 200 çул хушшинче те туса хăварма пултарайманнине пурнăçлама пултарчĕ.

**В. ЛЕОНИДОВ**
**çырса илнĕ.**

Ĕç ветеранĕ аса илет

# Колхоз-миллионер

1951 çулхи çур аки енне Муркаш ял Советĕнчи вак колхозсем пĕрлешсе пĕр пысăк хуçалăх туса хучĕç. Ăна ертсе пыма КПСС райкомĕ Е. Андреева сĕнчĕ. Вăл вăхăтра Евтихий Андреевич хатĕрлев министерствин районти уполномоченнăйĕнче ĕçленĕччĕ. Пухура вăл кĕскен хăйĕн биографийĕпе паллаштарчĕ. Ăна унччenex лайăх пĕлнĕ колхозниксем Евтихий Андреевича пĕр саслă пулса пĕрлешсе çĕнĕрен йĕркеленнĕ колхоза ертсе пыма шанчĕç. Колхозниксем çĕнĕ колхоза «Знамя труда» ят парасси пирки те çак пухурах калаçса татăлчĕç.

Йывăр вăхăтчĕ. Пĕрлештернĕ колхозри ĕнесене Çурлатринчи фермăна вырнаçтарнăччĕ. Нина Курбатова доярка аса илнĕ тăрăх ун чухне ĕнесене йăтса тăратмалла пулнă. Председатель çакнашкал тару-тăрура та куллен майлах ĕç кунне фермăран пуçланă, ĕне сăвакансене выльăхсене ура çине тăратма хăй пулăшнă.

Çур çултанах лару-тăру ырă еннелле улшăма пуçларĕ. Çак çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне Евтихий Андреевич хăйĕн колхозникĕсемпе мухтанма пултарни пирки пуçласа пĕлтерчĕ. «Эсир пулăшнипе, ĕçленипе кăна колхоз ура çине тăма пуçларĕ», – терĕ вăл. Çавăн чух хуçалăх ертӳçи ура хуçса ташша яни пирки каярах «Обгоняя время» кĕнекере те çырса кăтартрĕç.

Пĕр çул иртрĕ çапла, икĕ çул – колхоз тăтăшах çирĕпленсе пычĕ.

Хуçалăхри ĕçсене лаша вăйĕпе пурнăçланăран 9 уй-хир бригадинче те кӳлмелли 12-15-шер лаша тăратчĕ. Тĕллевлĕ ĕçленипе хире фермăсенчен тислĕк ытларах тухма пуçларĕ. Çакă колхоза çĕр улмипе ĕçлеме пуçласан самаях тĕкĕ пулчĕ. Сухаламалли çĕрсем çине гектар пуçне 15-20 тонна тислĕк тиветчĕ. Çĕр улми пуссисене вара вунă хут та ытларах. Çапла ĕçлесе «иккĕмĕш çăкăр» тухăçĕпе пирĕн колхоз республикипех малтисен ретне тухрĕ. Хуçалăх ĕçченĕсен тăрăшулăхне кура çĕр улми лаптăкне те колхозра 220 гектара çитерчĕç. Ăна лартассипе тата чĕрсе кăпкалатассипе колхозниксем суха пуçĕпе ĕçлетчĕç, йывăç кĕреçепе кăларатчĕç, технологие пăхăнса упратчĕç.

Çĕр улми туса илессипе технологие çирĕп пăхăнса ĕçленĕрен кĕçех хуçалăхра «иккĕмĕш çăкăра» гектар пуçне 250-300 центнер туса илме пуçларĕç. Çак çимĕçе патшалăха сутасси те палăрмаллах ӳсрĕ. Пирĕн çĕр улми çав çулсенче вакунĕ-вакунĕпе Мускава, Воронеж облаçне, Монголие, Кубăна ăсанатчĕ. Халĕ пирĕн колхоз миллионер пулса тăнине пĕр шутлавпа çирĕплетем-ха. Астăватăп, пĕр килограмм çĕр улми 30 пус тăратчĕ. Апла пулсан пĕр центнер хакĕ – 30 тенкĕ. Колхоз пĕр гектартан 250 центнер тухăç илнĕ пулсан унăн хакĕ 7500 тенкĕпе танлашатчĕ. Çапла вара 220 гектар çинчи çĕр улми мĕн чухлĕ тупăш панине шутласа кăларма та йывăр мар: 220 гектар Х 7500 тенкĕ. Пулать: 1650000 тенкĕ. Акă ăçта пулнă вăл Е. Андреев ертсе пыракан колхозăн миллион йăви. Евтихий Андреевичăн тĕллевлĕ ĕçне унпа пĕр вăхăтра ĕçленĕ ялти ватăсем паян та ырăпа çеç аса илеççĕ.

**Василий КРЮЧКОВ.**

# Халăх председателĕ, пултаруллă ертӳçĕ

Районăмăр историне тишкерме тăрсан кирек хăçан та Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев ячĕ чĕлхе çине килет. Аслăрах ăрури çынсем ăна Муркашсен председателĕ тесе аса илеççĕ. Çакăн пек хаклавпа иртнĕ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче çуралнисем те калаçу «Знамя труда» колхоз ертӳçи пулнă Евтихий Андреевич Андреев пирки пынине ăнланса илеççĕ пулĕ тесе шутлатăп.

Пирĕн паллă ентешĕмĕр асăннă хуçалăха 1951 – 1981 çулсенче ертсе пынă. Ертсе пынă çеç мар, ăна çĕр-шывĕпех паллисен ретне тăратнă. Евтихий Андреевич ячĕпе пĕрлех «Знамя труда» колхоз сумĕ те çав çулсенче республикăра та, унăн тулашĕнче те питĕ паллă пулнă. Хуçалăх çитĕнĕвĕсене кура унăн ертӳçине районтисĕр пуçне республикăра тата Раççей шайĕнче депутат пулма темиçе те суйланă. Евтихий Андреевич вара ниçта та хăйĕн ятне яман, Муркаш чапне çĕкленĕ.

Çĕр ĕçне чунĕпе парăннă ертӳçĕне ӳсĕмĕсене кура 1966 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă. Çакă вăл Муркаш еншĕн те пысăк чыс тесе шутлатăп.

Нумайăшĕн асĕнче Евтихий Андреевич ырă ĕçĕсемпе тарăн йĕр хăварнă. Хăйне тӳрременĕх пĕлмен çынсен асĕнче те пирĕн ентеш хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтакан, çав вăхăтрах хуçалăхпа колхозниксен пурнăçĕнчен пĕр шит те уйрăлман, çĕр ĕçне чунĕпе парăннă ертӳçĕ репутацийĕпе упранса юлнă. Çавăнпах ĕнтĕ 1981 çулхи çĕртме уйăхĕн 16-мĕшĕнче, вăл вилнĕ хыççăн темиçе кунтанах, колхозниксем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче «Знамя труда» хуçалăха Е. Андреев ятне пама йышăннă.

Вăл е ку хуçалăха унăн ертӳçин ятне панă тĕслĕхсем историре часчасах тĕл пулаççĕ теме çук. Çакă та Евтихий Андреевич ку тăрăхшăн чăнах та питĕ пултаруллă, халăх хисеплекен председатель пулнине çирĕплетет. Вăл вăхăтра «Знамя труда» хуçалăхра уй-хир бригадинче вăй хунисем, ĕне сăвакансемпе сысна пăхакансем, механизаторсемпе водительсем, ытти ĕçченсем халĕ пысăк пенси илнинче те Е. Андреевăн тӳпи пур тесе çирĕплетеççĕ, тӳрĕ кăмăлпа вăй хурса лайăх «ĕç кунĕ» тума пултарнишĕн ăна паян та тав тăваççĕ.

Хастар ентешĕмĕр çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа паян эпир вăл ертсе пынă хуçалăхăн малтанхи çулĕсен ӳсĕмĕсем мĕнрен килни пирки сăмах тапратас терĕмĕр. Тен, хаçат вулакансем те ку темăпа хăйсен шухăшĕсене пĕлтерĕç, аса илĕвĕсемпе паллаштарĕç. Вĕсенчен кашниех паянхи çамрăксемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулĕ тесе шутлатăп.

1951 çул пуçламăшĕнче Е. Андреев Муркаш, Çĕньял Муркаш, Шаптак, Çурлатри тата Малиновка ялĕсен пĕрлештернĕ хуçалăхне ертсе пыма пуçланă. Пĕрлештернĕ çĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 2271 гектар пулнă. Çав шутра сухаламалли çĕрсен калăпăшĕ – 1680 гектар.

Хуçалăх тытăмĕ ертӳçĕрен тата правлени членĕсенчен пуçланать. Пысăкланнă хуçалăхăн малтанхи правлени членĕсем çаксем пулнă: Е. Андреев (председатель), Совет Союзĕн Геройĕ А. Воробьев (председатель çумĕ), З. Магаев (тĕп бухгалтер), В. Чубуков (счетовод) тата З. Синичкина (кассир).

Çур акине хирĕç пĕрлешсе тĕрекленнĕ хуçалăхăн укçа-тенкĕ ыйтăвĕ пулнăран çурхи ака-сухана ăнăçлă ирттерес тĕллевпе колхозăн патшалăхран 90 пин тенкĕ ссуда илме тивнĕ. Йывăрлăхсем нумай пулнă пулин те, çĕр ĕçченĕсем пуç усман. Пысăкланнă колхозра уй-хир бригадисене тăххăр йĕркеленĕ. Вĕсене П. Костин, А. Сильвестров, В. Любимов, А. Столбов, И. Магаев, И. Спаскин, В. Волков, М. Смирнов тата В. Федоров бригадирсем ертсе пыма пуçланă. Агроном ĕçне çак вăхăта аслă пĕлӳ илнĕ специалист Е. Ильина кӳлĕннĕ.

Çак йыш хуçалăх ĕçне пуçламăш çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ. Вĕсене аталанма тивĕçлĕ условисем туса парассишĕн ĕçе кӳлĕннĕ.

**(Малалли çитес номерте).**

**В. ФЕДОРОВ.**

22-304, 22-238, 22-316, 22-449 телефонсемпе шăнкăравлăр е электронлă адрессемпе çыхăнăр: yadrin@press.cap.ru е yadrred@cbx.ru

# Тĕрĕс суйлав тума тăрăшăр

**Вĕрентӳ**

***Етĕрнери 25-мĕш номерлĕ професси училищинчен Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2012 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнчи 126 № йышăнăвĕпе Чăваш Республикин вăтам професси вĕрентĕвĕн «Етĕрнери агротехника техникумĕ» автономи учрежденийĕ туса хунă.***



Иртнĕ çул вĕрентӳ учрежденийĕ Пĕтĕм Раççейри «Модернизация образования сельских профтехучилищ» конкурса хутшăннă, лауреат дипломне тата Раççейри чи лайăх 100 НПО тата СПО хушшинче Европа пахалăхĕн ылтăн медальне тивĕçнĕ. Ку вăл профтехучилищĕн 60 çулхи юбилейĕ тĕлне паха парне пулса тăнă.

Çак çулсем хушшинче халăх хуçалăхĕн çĕршер те пиншер специалистне вĕрентсе хатĕрленĕ. Тĕрлĕ районсенче, çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăй хураççĕ вĕсем. Етĕрнери профтехучилищĕрен çĕршывĕпе паллă çынсем сахал мар вĕренсе тухнă. Вĕсем хушшинче Николай Малов – Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Владимир Иванов – Етĕрне районĕнчи çирĕп шутланакан «Заветы Ильича» хуçалăх ертӳçи. Чăваш Республикин сывлăх сыхлав ĕç министрĕн Владимир Ивановăн тата 25-мĕш ПУ директорĕн Олег Паликинăн ывăлĕсем те Етĕрнери профтехучилищĕрен аслă çул çине тухма пултарнă.



Виççĕмĕш çул вĕренӳ заведенине Олег Паликин ертсе пырать. Вăл хăйĕн энергийĕпе, умри тĕллев патне талпăнакан ертӳçĕ пулнипе палăрса тăрать. Унччен кунта директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса тăрăшнă май вăл учреждени проблемисене лайăх пĕлет.

Нумаях пулмасть эпир 25-мĕш ПУ-ра пулса куртăмăр. Кунти ертӳçĕсемпе, преподавательсемпе, вĕренекенсемпе тĕл пултăмăр.

«Паянхи куна пирĕн вĕренӳ заведенийĕнче 290 çын пĕлӳ илет, – **каласа парать О. Паликин (иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре варринче)**. – Вĕсене вĕрнтес енĕпе 31 педагог вăй хурать. Ку шутран 80 проценчĕ ытла пĕрремĕш тата аслă квалификаци категорине тивĕçнĕскерсем. Пуçламăш професси пĕлĕвĕ парассипе 4 енпе ĕçлесе пыратпăр: ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕсене, автомеханиксене, повар-кондитерсене, пĕтĕмĕшле строительство маçтăрĕсене вĕрентсе хатĕрлетпĕр. Кунсăр пуçне хушма пĕлӳ парассипе 15 программа ĕçе кĕртнĕ.

Заведенин пурлăхпа техника бази çуллен тĕрекленсе пырать. Пирĕн патра кирлĕ оборудованипе тивĕçтернĕ 14 кабинет (1 компьютер кабинечĕ), 6 мастерской, 2 лаборатори, анлă столовăй, акт тата спорт залĕсем. Транспорт единицисем чылай, вăл шутра ял хуçалăх техники те.

2 çул хушшинче эпир 4 миллион тенкĕлĕх ытла капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттертĕмĕр: вĕрентӳ корпусĕнче, столовăйпа общежитире урайсемпе алăксене улăштартăмăр, мастерской çивиттине юсанă, картиш таврашĕнчи, стадионăн тата автомобильсемпе çӳреме хăнăхмалли полигонăн территорийĕсене йĕркене кĕртнĕ. Хамăр укçа-тенкĕпе 4 техника единици – автобус тата çăмăл автомашинăсем 3 – туянтăмăр.

Преподавательсемпе вĕренекенсем професси тĕлĕшпе республикăра ирттерекен конкурссене, художество пултарулăх конкурсĕсене, спорт ăмăртăвĕсене ăнăçлă хутшăнаççĕ, призлă вырăнсене тивĕçеççĕ. Юлашки çул хушшинче çеç ачасене çитерме укçа-тенкĕ уйăрасси 4 хут ӳсрĕ.

Вĕренӳ заведенийĕ рабочисемпе специалистсем хатĕрлеме Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш тата Элĕк районĕсенчи 30 ытла предприятипе тата организаципе килĕшӳсем йĕркеленĕ.

Профтехучилищĕн килĕшӳсем Чăваш ял хуçалăх академийĕпе тата Чăваш патшалăх университечĕпе те пур. Пирĕн патран ăнăçлă вĕренсе тухакансем хыççăн хăйсен пĕлĕвне асăннă вĕрентӳ заведенийĕсенче ӳстерме пултараççĕ».

Эпир вĕренекенсемпе те тĕл пултăмăр. **Повар-кондитера вĕренекенсем Мария Белугина, Елена Максимова тата Анна Петрова** (пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре) **«лайăх» тата «питĕ лайăх» паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пыраççĕ. Вĕсен «хĕрлĕ диплома» вĕренсе тухма пур шанăç та çителĕклĕ.**

«Эпĕ хам Волгоград облаçĕнчен, – каласа парать Мария. – 1-мĕш класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн асанне патне Етĕрне районне куçса килтĕмĕр. Вырăнти шкула «4» тата «5» паллăсемпе вĕçлерĕм. Хам шухăшпах Етĕрнери профтехучилищĕне тата повар-кондитер профессине суйласа илтĕм. Мĕншĕн тесен кирек епле хĕрĕн те, хĕрарăмăн та чи малтанах хатĕрлеме, пĕçерме лайăх пĕлмелле вĕт-ха. Тӳрех 2-мĕш курса йышăнчĕç. «Питĕ лайăх» вĕреннĕ май пысăклатнă стипенди илсе тăратăп. Стипенди шайĕ мĕн чухлĕ пуласси тĕрлĕ мероприятисемпе конкурссене хутшăннинчен, призлă вырăнсем йышăннинчен, вĕренӳ заведенийĕн пурнăçне активлă хутшăннинчен килет, 2000 тенкĕпе те танлашма пултарать. Кăçал эпĕ професси ăсталăхĕн республикăри конкурсне хутшăнтăм. 10 участник хушшинче «Ĕç культури» номинацире дипломпа сертификата тата поварсен парнине тивĕçрĕм.

Етĕрнерен вĕренсе тухсан ял хуçалăх академине вĕренме кĕрес тетĕп, технолог пулса тăрса илнĕ специальноçпа ĕçлема шухăшлатăп».

«Эпĕ те кунта Николаевăри вăтам шкулăн 11 класне пĕтернĕ хыççăн килтĕм, – калаçăва тăсать Елена Максимова. – Шкула «5» паллăсемпе кăна вĕçлерĕм. Тӳрех пулас профессие суйласа илеймерĕм. Çавăнпа малтан повар-кондитера вĕренес терĕм. Атте-анне хирĕç пулмарĕ. Кунти вĕрентӳ условийĕсемпе преподавательсем пирки унччен пĕлнĕ пулсан эпĕ кунта 9 класс хыççăнах килме пултарнă. Вĕренме пур условисене те туса панă, преподавательсен коллективĕ вăйлă, маçтăрсемпе воспитательсем кăмăллă, общежитире лайăх условисем туса панă, теорие вĕрентнипе пĕрлех практикăлла ĕçсене те хăнăхтарса пыраççĕ. Тӳлевсĕр апат çитереççĕ. Салатсемсĕр пуçне 1–2 аш блюди пур, йогуртсем, улма-çырла, кондитер изделийĕсем тата ыттине те парççĕ».

«Эпĕ вара 9 çул вĕреннĕ хыççăн килтĕм профтехучилищĕне, – калаçăва хутшăнать Аня Петрова. – Шкулта «3» тата «4» паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пынă. Ытлашши вĕренме те кăмăл пулман. Кунта вара вĕренме мана питĕ килĕшет. Преподавательсем вăйлă, питĕ лайăх ăнлантарса параççĕ. Япăх вĕренме май та çук тетĕп. Халĕ «4» тата «5» паллăсемпе кăна вĕренетĕп. Пысăклатнă стипенди илсе тăратăп. Лайăх вĕренме, конкурссене хутшăнма хавал та, кăмăл та пур. Стипендие икĕ е виçĕ хут та ӳстерсе тӳлеме пултараççĕ вĕт-ха».

Хĕрсем общежитири условисемпе кăмăллă. Унта хăтлă пурăнма пур майсем те çителĕклĕ: хăтлă пӳлĕмсем, душ кĕмелли кабинăсем, кашни хутрах видеокамерăсем те вырнаçтарнă. Вĕсем хăйсен ятарлă дисциплинăсем енĕпе ĕçлекен преподавательне Любовь Романовăна, Ольга Шорникова маçтăра, физкультура преподавательне Раиса Давыдовăна, директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумне, психолога тата педагога, унпа яланах пĕр чĕлхе тупма май пур юлташне Наталья Филипповăна, Алевтина Ефремова воспитательницăна тата хăйсен директорне, чăннипех малашлăх пирки шухăшлакан хастар ертӳçĕне Олег Паликина ырăпа кăна асăнаççĕ.

**Виктор Анисимов – профтехучилищĕн музыка чысĕ тата мухтавĕ.** Унччен Тури Ачак шкулĕнче вĕреннĕскер, Лапракассинчи Культура çуртĕнче иртнĕ «Латус» фольклор ансамблĕн участникĕ. Училищĕне 9 класс хыççăн килнĕ. Автомеханика вĕренесшĕн пулнă. Вĕренӳ заведенийĕ пурăннă вырăнтан инçере пулманни уншăн питĕ меллĕ. Проезднойсене тӳлеççĕ, кунсерен 3 хут лайăх апатлантараççĕ. Кун пеккине ĕмĕтленмелли кăна. Кашийĕнех хăйĕн пултарулăхне аталантарма май пур. Виктор художество пултарулăхне активлă хутшăнать, районти тата республикăри конкурссенчен айккинче тăрса юлмасть. Нумай пулмасть Шупашкарта «Çамрăк талантсем» фестивале хутшăнса икĕ номинацире – «Халăх вокалĕ» тата «Художество сăмахĕ» номинацисенче – çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Пуçламăш професси пĕлĕвĕ илнĕ хыççăн кунта агротехникумра вăтам професси пĕлĕвĕ илме, кайран вара Чăваш ял хуçалăх академине вĕренме кăме палăртать. Техникумран ăнăçлă вĕренсе тухсан вăл унта 3-мĕш курса экзаменсемсĕрех кĕме пултарĕ.

**Александр Андреевпа Евгений Сымолкин – активистсем, вĕренӳ отличникĕсем тата спортсменсем.** Саша – çăмăл атлетика енĕпе республика чемпионĕ. Яшсем, пулас автомеханиксем, республикăра иртекен пур ăмăртусене те хутшăнаççĕ, призлă вырăнсем йышăнаççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем производство практикинче.

Ытти районсенчен килнĕ яшсем те кунта ăс пухаççĕ, специальнăç илеççĕ. Акă **Владимир Яковлевпа Алексей Кириллов** (виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре) **9 класс хыççăн кунта вĕренме Муркаш районĕнчи Тушкасси ялĕнчен килнĕ.** Яшсем вĕренӳре те, общественăлла ĕçсенче те активлă. Кăçал вĕренсе пĕтереççĕ ĕнтĕ, аслă профильлĕ тракторист-машинистăн специальнăçне алла илеççĕ. Училище хыççăн Раççей Çарĕнче хăйсен тивĕçне пурнăçлама хатĕрленеççĕ.

Салтакра пулнă хыççăн Владимир тăван яла таврăнма шухăшлать. Тăван хуçалăхра ĕçлеме тытăнасшăн, хăй вара заочнă майпа ял хуçалăх академийĕнче те малалла вĕренме тĕв тăвать. Мĕншĕн тесен ял хуçалăхĕнче те паян ăста специалистсем кирлĕ. Ун пирки Владимир училищĕне республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев килсе кайнă чухне те калаçнă.

Алексей та малашне хăй суйласа илнĕ специальнăçпех ĕçлеме палăртать.

Халĕ 3-мĕш курс студенчĕсем (выпускниксем) районти ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацийĕсенче практикăра. Ертӳçĕсем пĕлтернĕ тăрăх яшсемпе хĕрсем хăйсене шанса панă ĕçсене тивĕçлипе пурнăçлаççĕ, профтехучилищĕре илнĕ пĕлӳпе тата ăсталăхпа туллин усă кураççĕ.

**Профтехучилищĕрен агротехника техникумĕ туса хунă май мĕн улшăнать-ха, вĕрентӳ заведенине реформăлассин малашлăх планĕсем мĕнлерех?**




«Вĕрентӳ процесĕ пĕр вĕçĕмсĕр пулса пырĕ. Вĕрентӳ ĕçне-хĕлне малашне те пуçламăш професси вĕрентĕвĕн 4 енĕпе (ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕ, автомеханик, повар-кондитер, пĕтĕмĕшле строительство ĕçĕсен маçтăрĕ) туса пырĕç, хушма вĕрентĕвĕн 15 программи те юлĕ, – каласа парать О. Паликин. – Кунсăр пуçне вăтам професси вĕрентĕвĕн 2 ушкăнĕ уçăлать. Вĕсем çак специальнăçсемпе пулĕç:

**– автотранспорта техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрасси тата юсасси (техник-механик);**

**– электричество тата электромеханика оборудованине техника тĕлĕшпе ĕçлеттересси тата пăхса тăрасси (отраслсем тăрăх) (техник-электрик).**

Пуçламăш професси пĕлĕвĕ илнĕ выпускниксем кунтах вăтам професси пĕлĕвĕ те илме пултараççĕ. Агротехника техникумĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнисене вара çӳлте асăннă аслă вĕренӳ заведенийĕсенчен пĕринче вĕренме çул уçăлать. Вĕсене экзаменсăрах 3-мĕш курса вĕренме йышăнĕç».

Преподавательсемпе производство маçтăрĕсене çĕнĕлĕхсене вĕрентсе хатĕрлеме производствăран уйăрмасăрах 3 уйăхлăх курссем йĕркеленĕ. Çак ĕçсене республикăри вĕрентӳ институчĕн преподавателĕсене явăçтарнă.

Çĕнĕ вĕренӳ заведенийĕн майĕсем чылай анлăланаççĕ. Кунта пур йышши вĕрентӳ мелĕсемпе (очнă, заочнă майпа, каçхи вĕрентӳпе) вĕрентӳ процесне 700 ытла çынна явăçтарма май пулать. Вăл шутра ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен тата учрежденисен специалисчĕсене те.

Ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен хăйсем валли пысăк квалификациллĕ специалистсем вĕрентсе хатĕрлеме, специалистсен квалификацине ӳстерме агротехникум дирекцийĕпе килĕшӳсем йĕркелеме анлă майсем уçăлаççĕ. Шкул директорĕсемпе ашшĕ-амăшĕсем те хăйсен ачисене тăван техникумра вĕрентессинчен аякра юлмĕç тесе шухăшлатпăр. Шанăр, пирĕн патра çавна валли мĕн пур условисем пур.

**25-мĕш ПУ вĕренӳ заведенийĕнче вĕренесси пирки пурне те кирлĕ консультаци пама хирĕç мар.**

**Адресĕ: Етĕрне хули, Октябре 50 çул урам, 71 «г» çурт, тел.: 22-3-44.**

## Спорт

# Республика шайĕнче малтисен ретĕнче

Шупашкарта майăн 15-мĕшĕнче хĕллехи спорт тĕсĕсен центрĕнче Чăваш Республикин йĕлтĕрпе тупăшакансен федерацийĕн анлă канашлăвĕ иртрĕ. Унта пурнăçланă ĕç-хĕле пĕтĕмлетсе çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç. 2011 – 2012 çулсенчи хĕллехи спорт сезонĕнчи чи ăнăçлă спортсменсем шутне В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕн çак спортсменĕсене кĕртнĕ: Д. Ишуткин, С. Ишуткина, Н. Кузьмина, В. Кустина. Вĕсен тренерĕ – В. Кузьмин. Çапла вара пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе асăннă шкул пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ.

# П. Селюшкин – Раççей чемпионĕ

Апрелĕн 19 – 25-мĕшĕсенче Саратов облаçĕнчи Балаково хулинче бадминтон енĕпе Раççей чемпионачĕ иртрĕ. Унта вун пĕр регионти спортсменсем вăй виçрĕç. Ăмăрту тăватă категорипе пулчĕ. Чăваш Республикин чысне В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕн вĕренекенĕ Павел Селюшкин хӳтĕлерĕ. "Сахал куçакан" категорире пирĕн ентеш Раççей чемпионĕн ятне тивĕçрĕ. Çапла вара ăста спортсмена Европа чемпионатĕнче вăй виçме пĕрлештернĕ командăна кĕртнĕ. Апла пулсан ăна малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума ăнăçу сунар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**


**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Открылся магазин «Секонд-хенд» (комиссионка). Детская, мужская, женская одежда. Цены от 30 руб. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (территория агропромснаба). График работы с 8 до 17 часов, воскресенье – выходной. Тел.: 8-919-653-15-95.** 3-5.


### Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики 23 мая 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 21 июня 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: с. Тренькино, ул. Новая, д.5.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 66-7-31, эл. почта mrgilin_pos@cbx.ru, официальный сайт администрации Ильинского сельского поселения.

## Прогноз погоды

| | среда 23 мая | | | | четверг 24 мая | | | | пятница 25 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +16 | +21 | +18 | +12 | +9 | +13 | +15 | +10 | +6 | +12 | +15 | +11 |
| Давление мм | 745 | 743 | 744 | 746 | 749 | 749 | 752 | 752 | 753 | 754 | 752 | 752 |
| Влажность % | 74 | 72 | 77 | 62 | 39 | 41 | 34 | 27 | 50 | 44 | 36 | 37 |
| Ветер м/сек | 3 | 1 | 4 | 5 | 5 | 6 | 5 | 5 | 4 | 4 | 3 | 2 |
| | З | С | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 04:25 | 21:14 | | | 04:23 | 21:16 | | | 04:22 | 21:17 | |
| Луна восход / заход | | 06:06 | 23:21 | | | 07:05 | 23:55 | | | 08:12 | - | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 4-10.


### Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 23 мая 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 21 июня 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д. Одаркино, ул. Центральная, д.2.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 61-2-00, 61-2-36, эл. почта mrgchuma_pos@cbx.ru, официальный сайт администрации Чуманкасинского сельского поселения http://gov.cap.ru/main.asp?govid=429.


**Организация реализует средства защиты растений, препараты дотируются, скидки. Телефон в Чебоксарах: (8352)230-500, 8-900-333-5102.** 4-5.

**25 мая с 8 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу трикотажа и обуви из натуральной кожи производителей г. Ульяновск, Москва.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
**Замер. Доставка бесплатно.**
**Низкие цены.**
**Тел.: 8-987-576-65-62.** 10-10.

**В организацию требуются: токарь с опытом работы, автомаляр с опытом работы, автослесари по ремонту а/м ГАЗ-66, ГАЗ-53, ЗИЛ-131, УРАЛ. Тел.: 8-927-665-19-89, 8-909-301-90-73.** 4-5.

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
**МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ**
*для покупки и строительства жилья*
*% СТАВКИ ПО ЗАЙМАМ СНИЖЕНЫ*
**ЗАЙМЫ**
*на повседневные цели*
**СБЕРЕЖЕНИЯ**
*АКЦИЯ "МАЙСКИЕ ПРАЗДНИКИ"*
*% СТАВКИ УВЕЛИЧЕНЫ*
*действует с 2 по 31 мая 2012 года*
**62-6-86**
**8 900 333 0001**
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru

**26 мая 2012 г. возле ФСК в с. Моргауши состоится праздник «День Российского предпринимательства»:**
**10.30 – открытие соревнования по мини-футболу;**
**18.00 – выставка – презентация;**
**20.00 – концертная программа;**
**21.30 – дискотека 80-х годов, фейерверк.**
**ПРИГЛАШАЕМ ВСЕХ НА ПРАЗДНИК!**

**Хĕрлĕпе шурă тĕслĕ февральте виççĕмĕш пăруламалли ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-846-61-40.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93.** 14-16.

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

* * *

**Моргаушское райпо организует продажу строительных материалов через магазин «Стройхозтовары» в кредит. Обращаться по тел.: 62-0-36, адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 23.** 4-5.

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» требуются разнорабочие. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59.** 1-2.

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру площадью 41,4 кв. м. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, 1 этаж. Тел.: 8-919-653-15-53.**

* * *

**Çулталăкри хура тĕслĕ тынашки çухалнă. Çамки çинче тата хырăм айĕнче шурă паллăсем пур. Куракансене пĕлтерме ыйтатпăр, пулăшнăшăн укçан тав тăватпăр. Тел.: 8-937-951-84-93, 8-927-842-93-80.**

* * *

**Продаю жилой дом с земельным участком. Тел.: 8-902-240-87-58.** 1-2.

* * *

**Хура тĕслĕ чупнă тынашки сутатăп. Хакĕ калаçса тăлнă тăрăх. Тел.: 8-906-133-01-80.** 2-2.

* * *

**Продаем тракторы Т-25, МТЗ-82.1, плуги, опрыскиватели, косилки, грабли-ворошилки, пресс-подборщики. Все новое. Тел.: 8(8352)40-67-65, 8-927-851-68-58.** 2-8.

* * *

**Мы, собственники земельных долей Полякова Нина Ивановна, Макарова Анна Васильевна, объявляем о выделении земельных участков в счет земельной доли общей площадью по 1,58 га каждый, расположенных на территории землепользования бывшего СПК «Новая Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, Юнгинского сельского поселения, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:080201.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Юнгинского сельского поселения.**

**МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ**

- **Кухни**
- **Прихожие**
- **Шкафы-купе**
- **Гардеробные**
- **Офисная мебель**
- **Стенки и многое другое...**

АКЦИЯ!!! Закажи мебель и получи денежный сертификат на покупку бытовой техники.

Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д.2
Здание бани- 2 этаж

**Тел: 8-927-665-96-46 Сергей (замер)**
**Вызов дизайнера бесплатный**


### Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 23 мая 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 22 июня 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д. Кораккасы, ул. Новая, д. 1.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 65-3-01, эл. почта mrgkadik_pos@cbx.ru, официальный сайт администрации Кадикасинского сельского поселения.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 22.05.2012 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4635.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.